Агивер Х. К.В. Иванов çулталăкĕ / Х. Агивер // Тăван Атăл. – 1990. - № 12. – С. 27.

***Редактор кĕтесĕ***

# К. В. ИВАНОВ ÇУЛТАЛĂКĔ

Кăçал чăваш литературин классикĕ Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ, ЮНЕСКОн XXV сессийĕ К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнине чыслама 1990 çулхи паллă кунсен Пĕтĕм тĕнчери календарьне кĕртрĕ. Апла пулсан, 1990 çул пĕтĕм тĕнчешĕн Константин Иванов çулталăкĕ пулса тăрать.

Кăçал, чăн та, К. В. Иванов менелникĕ нихçанхинчен те курăмлăрах иртрĕ, темелле. Республикăра, Ульяновскпа Пушкăрт тăрăхĕсенче, Мускавра К. В. Иванов ячĕпе уявлă кунсем кĕрлесе иртрĕç. Пин-пин çын хутшăнчĕ çав уявсене. Чикĕ леш енче те (Г. Айхи сăвăç тăрăшнипе) Кĕçтентин поэзийĕн техĕмне чылай çĕрте активсе пăхрĕç, чăваш культурин чаплă çыннин пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăлтан паллашрĕç. Хамăр хутлăхра та Константин Васильевичăн вилĕмсĕрлĕхĕ çинчен калакан тĕрлĕ материал пичетленчĕ, кĕнеке халлĕн те çапăна-çапăна тухрĕç. Ку — питĕ лайăх япала-ха. Апла пулин те, хамăр классикăн çĕр çулне çулталăк тăршшĕпех тивĕçлĕн, юратса, ĕненсе (ЮНЕСКО сĕннĕ пек) палăртса пытăмăр теме ниепле те пултараймастпăр. Çак паллă: çулталăка тĕпĕ-йĕрĕпе сума сумалли çулталăклăх программа пулмарĕ пирĕн. Тÿррипе каласан, К. В. Иванов кунĕсене шавлăн паллă туса ирттертĕмĕр те — лăплантăмăр. Чăваш ачи-пăчине кăна мар, республикăри шкулсенче вĕренекен ытти халăх ачисене те эпир К. В. Иванов камне хытарса ярса каласа параймарăмăр. К. В. Иванов урокĕсене анлăн ирттерейменрĕмĕр, эппин.

К. В. Иванов çулталăкĕнче К. В. Иванов ятне варалакансем те тупăнчĕç. Ку чухнехи ăçтиçуксем К. В. Ивановăн Шупашкарти Атăл хĕрринчи палăкне темле нĕрсĕр шĕвекпе сапса хăварнă. Пирĕн чĕресене çак ирсĕр япала питĕ хытă ыраттарчĕ. Ку нĕрсĕрлĕх, паллах, чăвашран мăшкăллас, чăваш çыннисене катăка хурас тĕллевпе тунă пулăм. Тен, ăна хăй чăвашне манса пыракан чăвашах тунă пуль.

Эпĕ тата çакна асăрхарăм: И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетне хирĕç савăлра пĕр вăхăт К. В. Ивановăн шутсăр пысăк портречĕ çакăнса тăчĕ. Çынни кам пулнине вара ниçта та çырман. Эпир, чăвашсем, вăл камне питĕ лайăх пĕлетпĕр-ха, К. В. Иванова вуламан çынсем вара вăл камне пĕлеймесĕрех юлчĕç.

Ырă пуçарăвăн кăлтăкĕ пайтах пуль. Ÿлĕм капламлăрах ĕç тăвас тесен вара чăваш чĕрĕлĕхĕшĕн хÿтте тăмасăр, вăй хумасăр нимĕн те пулмасть.

Хветĕр АГИВЕР